2007 çул – Ача çулталăкĕ

Çичĕ ача – çичĕ телей

Районти ытти ялсем пекех, йышлă ача-пăчаллă çемьесемпе пуянах мар халĕ Юнкăпуç ялĕ. Урампа пынă май ял ватăлса пыни самай сисĕнет. Çук, кил-çурчĕсем, хуралтăсем пирки каламастăп-ха эпĕ.

Ача-пăча сассисĕр ял кичемрех. Çапла тунсăхларах шухăшсемпе утаттăмччĕ ирхи урампа. Мана савăнтарас тенĕ пекех, пĕр хитре те тирпейлĕ курăнакан кирпĕч çурт хапхинчен харăсах çичĕ ача тухрĕ. Пысăкраххисем те пур, кĕçĕннисем те. Аслисем сумкăсемпе. Ăнланма йывăрах мар ĕнтĕ: аслисем шкула вĕренме каяççĕ, кĕçĕннисене ача садне ăсатаççĕ. Кăмăлĕсем пурин те савăк пулас, шăкăл-шăкăл каласа утаççĕ, кулаççĕ. Тен, чăрмантартăм та-и, анчах вĕсен каласăвне хутшăнмасăр чăтаймарăм.

Паллашрăмăр, манăн çĕнĕ çамрăк туссем – пĕр тăван Апроськинсем иккен. Чи асли – Алеша, кăçал 11-мĕш класран вĕренсе тухать, çарта пулма, малалла вĕренме ĕмĕтленет. Чи кĕçĕнни – Катя, 3 çулта, ача садне çӳрет. Хăй те пукане пекскер, аллине пукане тытнă. Унпа пит çепĕççĕн каласать. Ыттисем: Лена 9-мĕш, Коля 7-мĕш, Саша 4-мĕш классене вĕренме çӳреççĕ. Вĕренӳре те, обществăлла ĕçсенче те хастар. Аньăпа Петьăна, Катьăна пĕрле ирсерен ача садне ăсатаççĕ.

Çичĕ ача хальхи вăхăтра хăшпĕр шкулсенче çур класс. Çак "çур класа", йĕркеллĕ воспитани панипе пĕрлех, çитермелле, тумлантармалла, ĕçе вĕрентмелле. Çавăнпа та эпĕ вĕсен ашшĕ-амăшĕпе тĕл пулса каласасшăнччĕ, анчах ачисем вĕсем ĕçре иккенне пĕлтерчĕç. Каярахпа килсе курма сĕнчĕç.

"Йыхравĕ" кивелсе кайиччен çак каçах çитме шутларăм çĕнĕ тусăмсем патне. Сергей Михайловичпа Людмила Николаевна иккĕшĕ те Москакассинче вырнаçнă "Çеçпĕл" пĕрлешӳре вăй хураççĕ. Паян иккĕшĕ те пĕрремĕш сменăра пулнă иккен. Эпĕ пынă чухне Сергей Михайлович аслă ывăлĕсемпе пĕрле ĕне сăватчĕ. Виççĕшне – виçĕ ĕне. «Паян картишĕнче «арçын кунĕ» ирттерме шутларăмăр-ха, хĕрсене кантарас терĕмĕр. Арăмпа иксĕмĕр те хресчен çемйисенче çитĕнтĕмĕр те, кăштах выльăх тытмасан тем çитмен пек", – куларах каласрĕ ачасен ашшĕ. Çак "кăштах" сăмаха 3 ĕнене, 10 сыснана, картиш тулли чăх-чĕппе хур-кăвакала вырнаçтарать иккен вăл.

Кил хуçи мана пӳрте кĕме сĕнчĕ.

Алăкран кĕрсенех тасалăхпа типтерлĕх куç умне тухса тăчĕ. Эх, хĕрарăм куçĕ илем курма, чунĕ ăна ăнланма, алли çав илеме тума пĕлет-çке. Çапла-çке вăл кашни япала хăй вырăнĕнче пулсан. Пӳрт-çурта типтерлеме, ахаль япаларанах тĕлĕнмелле япаласем тума, тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме кашни хĕрарăмăн талант тени пур пулмалла. Людмила Николаевнан хуçалăхĕпе паллашсан çак чăнлăха тепĕр хут ĕнентĕм. Эпĕ кĕнĕ чухне вăл йышлă çемье валли апат-çимĕç хатĕрлетчĕ. Ыттисем те ĕçлесе "канатчĕç". Лена компьютерпа тем шыратчĕ. Саша та киле панă ĕçе тимлесех тăватчĕ. Ача садне çӳрекен Аня, Петя, Катя Çĕнĕ çул валли çĕнĕ сăвăсем вĕренетчĕç.

"Телей тени ача-пăча куллипе пуян çемьене кĕрет" тенине илтнĕччĕ-ха. Чăннипех те пурте телейлĕ ку çемьере. Ашшĕ-амăшĕ ачисемпе, ачисем ашшĕ-амăшĕпе савăнаççĕ. Ĕçсене те пурте пĕрле, ăшă кулăпа пурнăçлаççĕ. "Çапах та, Людмила Николаевна, мĕнле ĕлкĕретĕр-ха ĕçре те, килте те тирпей-илем тытса тăма?", – ыйтрăм ачасен амăшĕнчен. "Пĕччен мар вĕт эпĕ. Çичĕ ача пулăшаççĕ, тата мăшăрăм вăй парçитĕннĕскерсем, пĕр-пĕрне вăйăкулă, уяв тăрăх çеç мар, ĕçре те аван пĕлнĕ. Юратса пĕрлешнĕ, тулăх пурнăçпа пурăнма, нумай ача-пăчаллă пулма ĕмĕтленнĕ. Паян вара çемье тĕреклĕрех пултăр тесе тăрăшатпăр. Малтанхи вăхăтсенче пĕр-пĕрне ăнланманни, кӳренни пулкалатчĕ ĕнтĕ. Ун пек чухне ача сăпки умĕнче мирлешеттĕмĕр. Пепке патне пĕри пĕр енчен, тепри тепĕр енчен пыраттăмăр та ун çине пăхса кулса яраттăмăр.

Халĕ ачасем хамăрпа та, пăшăрханмаллиех çук. Анчах çак вĕренӳ çулĕнче Алешăн алла аттестат илмелле. Ун хыççăнах кĕçĕннисем те пурнăç çулĕ çине тухĕç. Çакă кăштах шухăшлаттарать: кам пулĕç-ши вĕсем, мĕнле çул суйласа илĕç? Темле пулсан та тĕрĕс çулпа кайни кирлĕ, усăллă çын пулччăрччĕç. Эпĕ çеç мар, кашни ача амăшĕ çавăн çинчен ĕмĕтленет ĕнтĕ", – тесе пĕлтерчĕ малалла хăйĕн шухăшне Людмила Николаевна.

Эпир ачасен амăшĕпе каласнă хушăра картишĕнчен "арçын кунне" ирттерекенсем те кĕчĕç. Йышлă çемьепе сыв пуллашнă май ачасен ашшĕне çапла ыйту патăм: "Халĕ, çĕршывра çын шучĕ чакса пынă май, патшалăх нумай ачаллă çемьесем еннелле тимлĕрех пăхма пуçларĕ. Эсир патшалăх пулăшăвĕпе усă куратăр-и?"

"Мĕн панине илетпĕр. Паманнине ыйтса тархасласа çӳремен. Кăçал, акă, çăмăллатнă майпа кредит илсе сарай купаларăмăр. Анчах ачасене эпир никама та шанса çуратман. Хамăршăн, хамăр телейшĕн çуратнă. Çичĕ ача – çичĕ телей", – терĕ чăн-чăн арçын.

Людмила Николаевна та, Сергей Михайлович та – 39 çулхи вăй питти, хастар çынсем, лара-тăра пĕлмеççĕ. "Çичĕ телей" çумне татах "телейсем" хушăнччăр вĕсен. Патшалăх пулăшнипе, çемьен кашни членĕ тăрăшнипе, кӳршĕпускил ăнланнипе, ваттисен пилĕпе ĕмĕчĕсем пурнăçланса пыччăр, мăнуксене çеç мар, мăнуксен ачисене те утьăкка сиктерсе тĕрĕс çул çине кăлармалла пултăр.

Н. ЗАХАРОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: Апроськинсен туслă çемйи.

Указа ăнлантарса пани

(Указ 1-мĕш страницăра пичетленет).

Редакци Указа ăнлантарса пама Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн Ертӳçинчен Энвер Аблякимовран ыйтрĕ:

– Президент Указĕпе 2007 çула Ача çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ.

Çак Указ Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров ертсе пынипе пурнăçлакан тĕллевлĕ патшалăх политикин тăсăмĕ пулса тăрать. Юлашки çулсенче Чăваш Енре кашни çулталăкăн программа шайĕнчи ячĕ пур: Çемье çулталăкĕ, Çамрăксемпе сывă пурнăç йĕркин çулталăкĕ, Парксемпе садсен çулталăкĕ. Çакă патшалăх влаçĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, организацисен, гражданла общество институчĕсен вăй-хăватне пĕрлештерме, умри тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама май парать.

Ачалăх – çын пурнăçĕнчи пысăк пĕлтерĕшлĕ тапхăр, вăй питти çулсене хатĕрленмелли, тăнăçлăхпа туслăха тĕпе хурса, çын прависене, пĕтĕм этемлĕхшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ăнлавсене тата çут çанталăка хисеплесе тĕнче курăм йĕркелемелли вăхăт.

Ача çулталăкĕнче ачасене пулăшас, вĕсен прависемпе интересĕсене хӳтĕлес тĕллевлĕ мероприятисем, çавăн пекех ырă кăмăл-туйăма тĕпе хурса воспитани памалли ыр кăмăллăх акцийĕсем иртĕç.

ХИСЕПЛĔ АННЕСЕМ!

Çут çанталăк хĕрарăма çав тери яваплă тивĕç панă, ачана пурнăç парнелесе, ăрăва малалла тăсасси. Çакна кашниех лайăх ăнланать: ачана тĕрĕс воспитани парса ура çине тăратма, ăна обществăна юрăхлă çын тума çăмăл мар. Сывлăх, ăс-тăн, тавракурăм, чун ăшши, çав вăхăтрах чăтăмлăх та вĕçĕ-хĕррисĕр пулмалла.

Хаклă аннемĕрсем! Эпир сирĕн ĕçченлĕхĕр, хастарлăхăр, сăпайлăхăр уменче пуç таятпăр. Пирĕнтен, ача амăшĕсенчен, мĕнле ăру çитĕнесси, район, республика аталанăвĕ мĕнле шайра пуласси нумай килет.

Аннемĕрсем, эсир – пурнăç тыткăчи, çемье тĕрекĕ, кил ăшши. Тав сире ачăрсемшĕн ĕмĕр тăршшĕпех пурнăç çути пулса тăнишăн, амăшĕн тивĕçне тӳрĕ чунпа пурнăçланăшăн.

Паян ача амăшĕсен ячĕпе Правительствăна ача амăшĕсемшĕн тăрăшнăшăн тав сăмахĕ калатпăр. Çавăн пекех пирĕнпе юнашар утакан мăшăрсене, ертӳçĕсене пире çак тивĕçе тытса пыма пулăшнăшăн, пире ăнланнăшăн, шаннăшăн тав тăватпăр.

Сире пурне те Ача амăшĕн кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп, çирĕп сывлăх, телейпе юрату, килĕшӳ сунатăп.

Хĕрарăмсен районти канашĕн ертӳçи А.Е. АНДРЕЕВА.

Ялти ятлă çынсем çинчен

Эпир курнă нушана никам та ан куртăр

Ялта çуралса ӳснĕ, хăйĕн пурнăçне ял хуçалăх отраслĕпе çыхăнтарнă çын, çăмăл мар пулин те, хăй юратнă ĕçĕсĕр пурăнаймасть. Нумай чухне вĕсен пархатарлă ĕçне ачисем малалла тăсаççĕ. Çакă вăл ашшĕ-амăшĕ хăйсен ывăлĕ-хĕрĕсемшĕн хастар ĕçсемпе тĕслĕх пулнине уççăнах çирĕплетет. Асăннă сăмахсем тӳреммĕнех Хорнуй ял тăрăхне кĕрекен Платкасси ялĕнче пурăнакан София Емельяновна Родионован кил-йыш кунçулĕпе тӳр килеççĕ.

Эпĕ София Емельяновнана хăйĕн пурнăçĕпе, ачалăхĕпе паллаштарма ыйтсан, мĕнлерех калам-ши, тенĕн, шухăша путрĕ. Лаштра çăка çинчи татăлса вĕçекен сарă çулçăсене тинкерчĕ. "Ачалăх. Пулнă-ши пирĕн вăл, тен, эпир ăна сиссе юлаймасăрах ĕç çулĕ çине ӳкнĕ. Çӳл тӳпере тăрнасем вĕçеççĕ. Тен тулăх та хаваслă ачалăх çавсем пекех çӳлтен-çӳлтен алă сулса çеç хăварчĕ пире. Çук, тем тесен те, пирĕн вăхăтрисене савăк ачалăха Турă пиллеймерĕ. Атте-анне кунçулне те Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин вучĕ нушалантарчĕ", – терĕ хурлăхлăн питри тарăн пĕркеленчĕкĕсене ĕçпе пиçĕхнĕ аллипе кăшт çеç сĕртĕнсе.

Вăл 1933 çулта апрель уйăхĕнче Платкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Çемьере ачасем пиллĕкĕн пулнă. Кĕтмен çĕртен Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă хыпар çитнĕ. Çакă пурне те шартах сиктернĕ, кашни киле хуйхă-асап илсе çитернĕ. Çемье пуçĕн синкер тапхăрăн пĕрремĕш кунĕнчех хаяр тăшманпа çапăçма тухса кайма лекнĕ. Амăшĕн хул пуççийĕ çине пысăк йыша тăрантарасси тата пĕтĕм йывăр ĕç тиеннĕ. 32 çулхи хĕрарăмăн ĕçне те каймалла, çемьере те майлаштармалла. Килти 5 ачапа 80 çулхи ватă амăшĕ хăй патне тимлĕх ыйтнă. 4-мĕш класа çӳрекенни асли пулнă, кĕçĕнни вара ултă уйăха çеç çитнĕ.

Вăл вăхăта София Емельяновна çапла аса илет. "Çав ытла та хăрушă кунсем манăн асăмран каймаççĕ. Тăтăшах аса илетĕп те куçăм шывланать, урăхла майĕ те çук. Çимелли çукки питĕ нушалантаратчĕ, тăхăнма çипуç та пулман. Тăраниччен çăкăр çиесси çав тери пысăк ĕмĕтчĕ. Пĕр вĕçĕм хырăм выçнăран, паллах, тăраниччен çывăрайман, ыйхи те килмен пулĕ. Çуркунне çитсен, çапах та, кăшт савăнаттамăрччĕ. Пĕрремĕш курăк тухсанах ăна çиме пуçлаттăмăрччĕ.Чăн та, эпир ас тивсе пăхман, çимен курăк юлмарĕ те пуль. Мĕн те пулсан чăмламаллах вĕт-ха. Утса, чупса çӳрекенсем татах тупкаланă, сăпкари мĕн курнă-ши? Анне шĕшкĕ кăчăкинчен пашалу пĕçеретчĕ те вăл та пулин сахал тиветчĕ.

Ирпе ирех, кăвак çутăллах, тăрса вутă хутса хатĕрлетчĕ, 5-6 çухрăмри уя ĕçлеме каятчĕ. Кун каçипе сĕм тĕттĕмччен вăй хунă хыççăн каллех килти ĕçсене пурнăçламалла. Çуллахи кĕске каçсенче çывăрма, кăшт канса илме вăхăчĕ те юлман, паллах. Эпĕ ун чух сакăр çулхискер пулнă та, аннен хуйхă-асапран тухакан куççульне ытлах ăнланайман та пулĕ. Тăрăшулăхне кура ăна бригадира суйларĕç. Пирĕн вара, вак ачасен, ĕç татах та хушăнчĕ. Ирпе хăйпе танах тăрататчĕ, пур ĕçе те пĕрле ĕçлеттеретчĕ.

Тăхăнмалли çипуç çукчĕ. Эпĕ 1-мĕш класа çӳреттĕмччĕ. Киле çитсен тулти ĕçсене вĕçлесен, ытлашши утса çӳремен, урари çăпата çĕтĕлет вĕт. Ăна туса пама пирĕн атте, асатте пулман. Хăш-пĕр ачасен килте, тĕрлĕ сăлтавсене пула, вăрçа кайман ашшĕсем е аслашшĕсем пурччĕ. Вĕсем вара ытлах аптăрамастчĕç. Турай шкулне 4 çухрăм утаттăмăрччĕ, урари çăпата епле чăтнă-ши? Çуркунне урасем витĕрех йĕпенетчĕç. Шкулта тĕрлĕрен хут çине çырнă: чĕркенĕ хут, квитанци тепĕр енĕ, кивĕ журналсем – ним те тиркемен. Чернила килтен ятарлă савăтпа илсе каяттăмăр, нумай чухне вăл юхса пир сумкăна варалатчĕ, ăна ятарлă кăранташ варринчен е юман çулçи çинчи мăкăльсенчен хатĕрлеттĕмĕр.

1942 çулта атте вилнĕ хыпар килчĕ те, анне, пушшех хуйхăрса, татăлса йĕретчĕ. Çав вăхăтсем куç умне тухаççĕ те хам çырнă сăвăри йĕркесем вĕçĕм чĕрене çураççĕ. "Хура вăрман кашлани, мăн çул çине илтĕнет. Салтак арăмĕ макăрни пусма вĕçне илтĕнет...Салтак арăм хуйхи кăшт та чакмасть, хушăнать... " Атте вилнĕ хыпара ĕненместчĕ вăл, çапах та килте арçын çук, пулăшакан кирлĕ тесе пире вĕçĕм çынсем патне ĕçлеме яратчĕ.

Вăрçăра пуçне хунă тесе 100 тенкĕ укçа паратчĕç, çакă вара шăпах пĕр мăшăр çăпата туянма çитетчĕ. Нуша пур ĕçе те кӳлĕнтерчĕ, çăпата тума вĕрентĕм. Ашшĕсĕр тăлăха юлнă ачасене çамрăклах пур ĕçе те тума тиврĕ: утă çулнă, вутă çурнă, çĕр сухаланă, акнă-лартнă, кĕр çитсессĕн вырнăкĕртнĕ. Çутă малашлăхшăн тĕнчене килнĕскерсем, пĕлӳ илесси çине те алă сулман. Ачаллах вăрмантан сахал мар вутă çĕкленĕ. Кайран, çулсем кайнăçемĕн, çăматă калăплама хăнăхрăм. Хĕр-тантăшсем хуйхă, савăнăç юррисене юрлатчĕç, тĕрĕ тĕрлетчĕç. Мĕн тăвас тетĕн, эпĕ тар юхтарса çăматă çапаттăм. Çапла, епле чăтса çитернĕ-ши, кам панă-ши чăтăмлăхне? Çӳлти Турă çеç панă пуль тӳсĕмлĕхне. Ачаллах хура-шурне тӳсмелле пулчĕ пирĕн вăхăтрисен", - каласа пачĕ, аса илме çăмăл мар пулин те, иртнине, чун-чĕрере тарăн йĕр хăварнине.

Çул хыççăн çул иртет, пурнăç малаллах каять. 1958 çулта София Емельяновна Семен Дмитриевич Родионовпа çемье çавăрать. Вăл та, вăрçă çулĕнчи ача пулнăран, çамрăклах хура-шурне нумай тӳснĕ. Пур ĕçе те аслисемпе танах ĕçленĕ. Хаяр вăрçă асар-писерĕ ку киле те аякка хăварман. Çапла Родионовсен çемйи ашшĕ-амăшĕсĕр юлать. Виçĕ çул çар службинче пулса, пурнăç çине ӳснĕ çын куçĕпе пăхать, ĕçе пикенет. Уншăн утар ĕçĕ ют пулманран, хурт-хăмăр аталантарас ĕçре вăй хума тытăнать. Килĕшӳллĕ пурнăçпа пурăнса икĕ ывăлпа пĕр хĕр çуратса ӳстереççĕ.

Вĕлле хурчĕсене пăхасси çăмăллисен шутĕнче мар, пĕччен ниепле те пурнăçласа пĕтерме май çук. София Емельяновна вара утар ĕçне пикенни 30 çул ытла çитрĕ. Ăруран-ăрăва куçакан ĕç е династи теççĕ ун пеккине. Вĕлле хурчĕн пĕлтерĕшне, Турă кайăкĕн пултарулăхне, ылтăнпа танлаштараççĕ. Вĕсене пăхакансем те çакăнтан аякра тăмаççĕ. Вăл мăшăрĕ хуçалăх утарĕнче тăрăшнă çулсенче хуртхăмăра аталантарма чылай вăй хунă. Утар тавра ешĕл чăрăшсем, патвар юмансем, лаштра çăкасем камăн тăрăшуллă аллисем лартнипе ешереççĕши? Паллах, пурнăçа хаклама пĕлекен, тивĕçлĕ пурăнма тăрăшакан мăшăр лартнăран тавралăха, утара илем тата усă кӳреççĕ вĕсем.

Шел, вăрçă çулĕсем нимĕн йĕр хăвармасăр иртмен иккен. Асар-писер кунсенче чăтса ирттернисем сывлăха та хавшатма пăхаççĕ. Халĕ ку утарта Ирина хĕрĕ вăй хурать. Вăл та ку ĕçе ачаллах хăнăхнă. Çапах та хуртхăмăр ĕрчетес вăрттăнлăха вĕрентсе пыраканĕ – çитмĕл урлă каçнă амăшĕ. Паян та вăл çак утара килсе кунти ĕçе пурнăçлама, хĕрне пулăшма вăй-хăл тупать. Тепĕр тесен, кунта тăван кил пекех. Хăй мăшăрĕпе ăсталанă пур япала та иртнĕ çулсене, хура-шурне, пĕрле ирттернĕ ĕмĕре, ырă вăхăтсене аса илтерет. Шел, хăш-пĕр саманнсем ырă тĕлĕк пек кăна. Мĕн тăвăн, пурнăç чăнлăхĕ çапла. Ахальтен шăрçаламасть ĕнтĕ вăл хăй сăввинче: "Тапаçланан пĕтĕм вăйран... Çапла иртет этем ĕмĕрĕ тапаçланса, тăрмашса".

Палăртма кăмăллă, Ирина Семеновна кăçал районта тăрăшулăхпа палăрчĕ. Вăл 1155 килограмм сутлăх пыл туса илме пултарчĕ. Пĕр çемье пуçне 21 килограмм тивет. Унсăр пуçне çĕнĕрен пилĕк çемье турĕ. Çакă ашшĕ-амăшĕ хуçалăхпа килти утарсенче ĕçлеме çамрăклах явăçтарнăран килет, паллах.

– Эпĕ утара атте-аннене пулăшма сахал мар çӳренĕ. Мана куллен пысăк пулăшу парса тăрать вĕсем ăс пани. Утара кĕретĕп те кашни япала аттене аса илтерет. Вучах чĕртетĕп те вăл тăрмашни куç умне тухать. Пӳрте кĕретĕп те вăл ăсталанă сĕтелпукан тата ытти япала мана вăй-хăват парса тăнăн туйăнать. Тавах вĕсене пире пурнăç çулĕ çине тăратнăшăн. Эпир мухтанатпăр, савăнатпăр вĕсен ывăл-хĕрĕсем пулма тӳр килнишĕн. Пирĕн яланах аттепе аннен ятне çӳлте тытасчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: София Емельяновна, тивĕçлĕ канура пулин те, утар ĕçне мала хурать.